„Канаш“ хаҫат суменҫе тухать.

# КАПКĂН

20-мӗш №

Нойапӗршӗн, 1926 ç. 2-мӗш ҫул тухать.

## Йӳнелни курӑнмасть.

Урхас-Кушкӑри (Шӗнерпуҫ вул.) потрепиттӗлсен копператтивӗ „Прокресс“ таварсен хакне ҫакарас вырӑнне хӑпартса пырать. („Канашран“)



— Таварсене йерне микроксене пӑхатӑни мӗн пиноккӑҫпе?

— Тавар хакӗсем йӳнелнине пӑхатӑп. Анҫах пиноккӑҫпе пӑхса та нимӗн те кураймарӑм Ку пиноккӑле аҫа салтакран илсе килнӗҫҫӗ те, киволсе кайнӑскер пулӗ, мур!..

# Ăçтан пĕлеççĕ-ши?

Вулĕçтăвком çуртĕ. Хĕвел, вăтанса пăхнă пек, ҫўреҫерен кăшт пуçне ҫакнĕ те сĕтел çинҫе хăрлаттарса çывракан стурăш питне пĕçертет. Пĕр сас-хура та çук, пĕр стурăш хăрлаттарса çывăрнипе, вăл çавăрăнкаласа выртни анҫах пўртри лăплăка хумхатаĭ. Унҫҫен те пулмарĕ пĕри вулĕçтăвком алăкне:

— Шак-шак шак!—тутарса илҫĕ.

Сĕтел çинҫе çывракан стурăш ал ҫăмăрĕсемпе куçне сăтăрса илсе, çăварне пысăккăн карса анаслаcа йаҫĕ. Унтан урайне сиксе анса унталла кунталла пăхкаласа илҫĕ те, урисене ик пăт пуканĕ çыхса йанă пек, сĕтĕркелесе алăк патнелле сулăнҫĕ.

— Кам унта? Мĕн ирех сĕтĕрĕнсе çўреттĕр?

— Епĕ вăл, уç ха, уç!—тенĕ сас илтĕнҫĕ.

— Ну, кĕр,—терĕ те алăка уçса йаҫĕ. Алăкран пĕр пăру тирĕнҫен çĕленĕ картуслă, хура накиткă тăхăнса йанă çын кĕҫĕ.

— Ну, мĕнле ха: пуштă çитмерĕ-и?—тесе ыйтрĕ стурăшран.

— Килмерĕ-ха, мĕн тата: çыру-мĕн кĕтетнем?—терĕ кăна хирĕç стурăш.

— Çыру мар-ха, «Капкăн» килменши, тетĕп. Астăватна есĕ пĕр кун йепле-ха сут хыççăн? Ташла-ташла ĕçрĕмĕр, вĕт, вулçĕрĕççуҫĕ пуçлăхсемпе, 4 ҫетвĕрт сăмакон пĕтертĕмĕр, тет килсе кĕнĕ çынĕ.

— Хăçан вăл?.. Астумастăп-çке?

— Ара авă, тунти кун каçпа ман патăмра витере ĕçрĕмĕр, вĕт-ха.

— Е, такçанхиве аса илнĕ есĕ, вăл пĕр ерне те ытла пуҫ-ха. Унтан кайран епĕр тата, есĕ çук пулас, Микула патĕнҫе ĕçрĕмĕр. Унта тата инттереснăрах пулҫĕ: леш Микула матки хăй те ўсĕр те, пирĕн çеврестар „хыçĕнҫен" лап-лап савса илет, вĕт...

Стурăш сăмахне каласа та пĕтерейменрĕ, алăкран пĕр вăрăм хура çын пырса кĕҫĕ. Пўртре шăп пулҫĕ. Никăш те пĕр сăмах ҫĕнмеççĕ. Унтан кам кĕнине пăлласа илсессĕн пăру тирĕ картусли:

— Мĕн хăрагса çўретĕн есĕ?—тесе хуҫĕ.

— Хăратасси мĕнни, пуштă çитмени-ха? тет вăрăм çынни.

— Ах—ха—ха—ха, тесе кулса йаҫĕç иккĕш те.—Ана кĕтме ирех килнĕçке вăл. Ахаҫ ир килтерĕн ес ăна...

— Аҫа, кам ухмах хытланаĭ çавна?—тесе пуçларĕ вăрăмми,—ерне хушшинҫе Шупашкара çавăрăнса та çитет. Хаҫ пĕр кун лешсемпе, сута илекенсемпе, питĕ вăрттăн ĕçтĕ ĕçрĕмĕр. Витере ĕçрĕмĕр, вĕт-ха, акă есĕ те пур... Çав ĕнерхи № «Канаш» çине тухнă та, вĕт. Акă пайан «Капкăн» килмелле, тенĕ-ха. Унта, кĕтсех тăр, мĕн те пулсан пирĕн çинҫен пурах ĕнтĕ.

— Ĕнерхи № çинҫе пури вара, ăçтаха? Епĕ йепле курман вара ăна?—терĕ пăру тирĕ картус.

— Акă, ман кĕсйерех çўрет вăл,—терĕ те вăрăмми, кĕсйинҫен „Канаш" туртса кăларҫĕ. Вăççĕшĕ те сĕтел çине тайăнса выртса „Канаш" вула пуçларĕç. Вуласа пĕтерсессĕн каллех тарăхса каласма тытăнҫĕç.

— Ăçтан пĕлеççĕ-ха ăна?... Темĕн ҫул вăрттăн тусассăн та сисеççĕ,—тесе пуçларĕ вăрăмми. Çук-ха, çак пионерсенех! Пĕрер вăрттăн çĕрте тытса шаккамалла пулаĭ пуҫ-ха...

Вăл каласа пĕтеретҫенех пăру картусли пуçласа йаҫĕ:

— Мана нимех те мар ха вăл, епĕ ĕçнине такам та пĕлет ĕнтĕ... Вăт сăрă лайăхах мар вара. Ҫармаллах пулаĭ вĕсене...

— Мĕнле ҫаратăн вĕсене тытса тĕвмесĕр?.. Пĕр-пĕр улахра мĕнте хупăрламалла пулаĭ и ха вĕсене... Кунта килеççĕ те вара, хăлхасене ҫанк тăратса итлесе çўреççĕ. А çав II—ăн пĕҫикки, тем тума килет вăл кунта? Килет те вара, кушак пек, йăпшăнса çўрет...

— Вара лере, Шупашкара, çырса йараççĕ вĕсем «аттаманĕ» патне. Леш вара çав тĕрлĕ сăрласа хураĭ, сас кăларма та çук...

Татах та нумайҫĕ пулĕ те калаçмалли, анҫах вăхăт нумайа кайнипе вулĕçтăвкома çынсем пыра пуçларĕç. Çынсем пухăна пуçласассăн пĕр пĕҫĕк пўлĕме кĕрсе ларҫĕç, тек илтеймерĕм вара: — Ăçтан пĕлеççĕшинех, теççĕ. Ҫăнах та, ăçтан пĕлеççĕ-ши çав атаманĕсем тĕнҫери пур ирсĕрлĕхе?

Тĕлĕнмелле! И. ПАҪУРА.




(Й у р ă).

Ĕĕвĕклесех йĕрет ма-а-т-тушка:
Ĕçсе супнă каллех ват упăшка.
Ĕçессе Панкрат агте ĕçет, маттур
ĕçет—
Çутти-мĕнĕ, сăмакунĕ тиркемест.
Ĕçмессерен майрине пуп кун памаст̆.
Çилхерен те... çамкаранах та таккат̆:

— Е-е! сыхлах хăна, майрам,
асту, сыхлан,
Çамрăксем çинелле ан пăх кан-
тăкран.
Ашкăнма мар, темпе çăлар хађ
пуççене,
Е-ех, инкек-синкек çитсе пусат̆
пупсене
Вилĕмех пуђ, пире вилĕмех кĕ-
тет—
Çаншăнçке ĕçеп еп, çаншăнçке
ĕçеп.

Алхасма тек пире çу-ук ĕнтĕ,
Пурте турра, çўлти туррах—çук
теççĕ.
Нит те, пит сахал çўреççĕ ђиркĕве.
Пирте çех мар, çаплах теççĕ пур
çĕрте.
Ĕненмеççĕ пĕлĕтри-и-сене,
Тек ђысламĕç пире те—çĕртр-и-
сене...

Сисрĕç, тупрĕç тĕнĕн никĕсĕсене,
Салтнăçем салтаççĕ ултав тĕвви-
сене.
Уçаççĕ ав шатах «таса мошђи-
сене»,
Хăватсем тăвакан çĕрми ўтсене.

Ылттăн кĕмĕл тупăксенђе мĕн
пур, тен?
Çўпĕ-çапă, çĕтĕк-çатăк, тĕрлĕ
трйађ*).

Кам ултавĕ, каласам-ха, камăн вăл?
Халăха епĕр, пупсем, лартаттăмăр.
Иконпа та хĕрессемпеле,
Типĕпе те çветтуйсемпеле
Пуç çаптарсах мăшкăланăђђĕ.
Лах!-латса кулсах та улталанăђђĕ.

Çынна—Тип тыт, хамăр—çу, çă-
марта...
Кушаканахђĕ те çавă пурнăç та!
Ех, мăнтарăн, ех, мантарăн
халăх та
Кĕл тавађђĕ пуçне хăнт! хант!
çапса.
Хăват кўрен, сыватакан çĕрми
ўт,
Кĕмĕл хăлаш—кирпĕђ купи, çĕ-
рĕк çўп!..

Халĕ ĕнтĕ, халĕ, ма-ат-тушка,
Хывăхпах тытаймăн хура халăха.
Ухмах мар вăл, ухмах мар тек
ĕненме,
Çўп-çаппа тин йыт та çĕрми ўт
темĕ.
Çĕршер çурта кам ларттăр-ха тур
умне?
Кам укçа тек пырса хугăр пуп
хўмне!..

ВАÇАНККА куçарнă.

*) Трећ, трйађ,—дрянь, çўпçам, тислĕк.

# Кăмаша вăрман улпуҫ „йĕркелĕхĕсем“.

Иетĕрне уйесĕн çурçĕрпе хĕвел анăç йенҫе илемлĕ Кăмаша йатлă улăхра ҫаплă вăрман улпуҫĕ пурăнаť.

Унăн хушамаҫĕ «Сакконăв» йатлă. Хушамаҫĕ тăрăх ку улпут питĕ саккун лă çын. Сĕм вăрманти шăпҫăк хăйĕн илемлĕ сассипе çак Сакконăва тăрантарса йăлăхтарнă, çавăнпа вăл хăйĕн пурнăçне çутатма урăх мелсем шыраса кăлараť. Хăйĕн улпутлăхне кăтартмашкăн хресҫенсем хушшинҫе пар лашапа çӳреме шут тытнă. Шутланă—тунă. Улпутшăн вăл йавăр ĕçех мар. Вăрманта пурлăх нумай. Унти пурлăха пĕр çынах пĕтерес çук. Кирлĕ çĕре—пуçлăхсем патне (унтан асли те пур) çырусем йанă, çӳренĕ. Ĕç вырăна кĕрсе пынă. Пар лаша йамшăк тытма çӳлтисем ку улутпа килĕшнĕ. Халĕ торки туса лашасем тытмалли анҫах йулнă. Анҫах Сакконăв торки туса ҫăрманмасť. Вăл ку ĕçе хăй йуратнă çынсене параť. Шганаш салинҫе çак улпутăн икĕ тус пулнă. Çитор Елекçипе Çтапан Хĕветĕрĕ. Кăсем ҫăнах та питĕ туслă пулнă. Лешсем те сисеç ăçта тутлине, çавăнпа хăйсем йенҫен улпута та ахалех хăвармаççĕ. Сăрине те уншăн хĕрхенмен, çĕрве те ĕçлесе пана, пурне те тунă. Питĕ йăпăлтатнă тилĕ туссем. Леш те вĕсене ахаҫ хăварман. Ырра хирĕç ырă, теççĕ. „Есĕр мана пулăшаттăр, епĕ те сире тав тăватăп“, тенĕ вăрман улпуҫĕ. Ҫăнах та Сакконăв çак туса тав туса, торкисĕр мĕнсĕрех, йамшăка кĕртет. Таврари çынсем çак ĕç çинҫен илтсен питĕ тĕлĕнсе кайрĕç. Саккунлă çынсен саккунĕ хăйсемпе пĕрлех.

Хакĕ йамшăк ҫупма нумай мар: 400 пăт утă, теленккă çинҫен лайăх йумансем, вутăлăх, т. ыт. ҫылай. Хресҫенсем çак хак çинҫен илтсен ĕнсисене çеç хыçса çӳреççĕ.

Питĕ те пысăк хак панă «улпут» хăй тусăсене йамшăк ҫупма. Тата çавăн ҫухлĕ парса тытнă лашасем кама туртараççĕ теттĕр пулĕ. Пăкарха.

Улпут майрин пĕҫĕк улпут çуралнă. Пысăк улпуҫĕ питĕ хĕпĕртенĕ. Иамшăк лашисем кунĕ кунĕпех улпут пӳрт умĕнҫе хатĕр тăраççĕ. Пĕҫĕк улпут çуралнине хисеплеме кирлĕ хатĕрсене хатĕрлесе йамшăк лашисем канма кĕлмесĕр ҫупнă. Пуппа ҫеҫукне, напăшкине, тĕне кĕртмелли таврашсене пирĕн йамшăк лашисем турттараççĕ. Ма турттарас мар, улпут хыснан, улпут аҫи те хыснан, лашасем те хыснан. Ҫукун çул çинҫи стантсана та, йуратнă «йăваш» ҫăвашсем патне те, улпут çемйине çак лашасемех турттараççĕ.

Çакăн пек ĕçсене курса 3—4 çын çак 26 çулта Мускава та, ҫăваш прокурорĕ патне те çырнă, анҫах ним сас ҫĕвĕ те çук. Вăрман пысăк, сас вăрман варĕнҫе çухалаť пулас.

Ку улпутăн «саккунлă» ĕçсем тата ҫыллай пулас пулаť: леçниксем те ун çинҫен шăппăн калаçкалаççĕ, анҫах:

— Улпута хирĕç тĕрĕс каласан, вырăнган кăларса ываťаť, тесе калас сăмахах калайми пулаççĕ.

Питĕ вирлĕн хăтланаť. Çапла ĕнтĕ Сакконăв пит саккунлă ĕçлет.

ХРЕСҪЕН.

---

## Ăлав шыракан.



Претçетаттĕл: Мĕн ĕçпе килтĕн, пуп йулташ?...

Пуп: Кĕркунне тыр-пул пур ҫух тырă пуçтарма тухас тетĕп. Ăлав пар-ха...

Претçетаттĕл: Сирнешкел ыйткалакансене ăлав парса та çитерес çук. Ăлав пирки „Капкăн“ ретаксине кайса ыйт, унта „тупса“ парĕç.

# Хĕрарăмсем Советра.

Мăн-Тутаркас йалсовеҭĕ Мĕтри Хветĕр арăмне—йалсовет ҭленне, хĕрарăм тесе саҫҫетанисене ҭĕнмест.
(„Канашăн“ 252 (1645) № рĕ).



— Ав, Хветĕр арăмĕ шыв патне кайат̆. Вăл шыв патĕнҭен килиҭҭен ҭасрах саҫҫетани туса илес.

---

## Хăравҫă ҫын.

— Микулай Микулайҭ! Епĕ Улатăр хулинҭен Шупашкара килтĕм. Мĕн те пулсан пулмĕ-ши мана?

— Мĕн пултăр сана? Вĕт Шупашкарпа Улатăр Ҭăваш респуплĕкĕ ҫĕрĕ ҫинҭе параҫҫĕ...

— Вăл ҫапла та... Авҭах епĕ ҫĕрле килтĕмҫке.

— Пур-пĕр. Кăнтăрла та, ҫĕрле те, пур вăхăтра та ҫӳреме пултаратăн.

— Ну, вĕт, епĕ кунта килнине никам та пĕлместҫке.

— Камăн ĕҫ пур санпа?—Есĕ пĕҭĕк аҭа мар, вĕт.

— Вăл ҫапла та, авҭах епĕ тĕрмерен тарса килтĕм ҪУҪМЕТ.

## Турра ĕненмен ҫын.

— Хветуҫ, турра ĕненетĕн-и?

— Е е е! Есĕ ҫапах турă халапне пăрахман ҫке. Епĕ ĕнтĕ ни турра, ни ыррине, ни усаллине виҫĕ ҫул ĕненместĕп. Епĕ, вĕт, кантитат!

— Акă шухăшла ха, Хветуҫ, ҫак пирĕн ҫурт айĕнҭе ҫын вилли шăммисем питĕ нумай. Пĕр кун кăмака ваҭҭи вырăн хатĕрленĕ ҭух нумай вилĕ шăммисем кăларнă. Ҫак алăкран ҫын кĕлетки утса кĕрсен, есĕ мĕн тăвăн?

— Воспоти турă!.. Пĕтрĕмĕрех. Турă тăтăр, унăн тăшманĕсем саланҭăр!

— Ара, есĕ, Хветуҫ, мĕн аташан?

— Усалсем килеҫрен питĕ хăрарăм. Ҫӳҫ-пуҫ вирĕлле тăрса карĕ. МИР.

# Йара-касси кашкăрĕсем.

## „Военнăй полошени“.

„Сала кайăк салмашăн,
Ула курак улмашăн.
Епĕр хамăр савнасшăн—
Сас паратпăр уллахшăн
Ай-йар, ай-йай-йак!“.

Çапла йантраттарса йал тăрăх хăйсен пурнăçне сарса хуҫĕç Иара-касси аҫисем. Туй ҫухне те, уйав ҫухне те, ахаҫ ҫухне ха-аплатса сикеççĕ вĕсем. Ахаҫ ҫухне пушшех:

„Ох-оххăм, оххотнĕк
Пур оххотнĕк пирĕн йалта“...

Ухутăна тухаççĕ вара питĕ хатĕр. Калама та çук—çĕнĕрен çĕнĕ пурнăç шыраççĕ.

«Тĕввик-тĕввик тăмани
Арлаççинҫе ҫăх сыхлаť;
Иара-касси ҫап шыраť,
Хамăр тупса парар и!..»

тесе таканапа авăсаççĕ пурнăçа. Пурнăç ăшне ҫупса кĕрсе кайрĕç.

* * *

„Ианах шăмми“, кавтăк куçĕсем ҫăнкăртатни... нимĕнех те мар. Ĕлĕкхи çамрăксем те ку тĕлĕшпе хаҫхисенҫен йулман.

Хĕрлĕ Ҫугай йенҫе аҫа-паҫа выртмара лашасене асаплантарнипе ҫапа тухаť. Лаша пуçне ури патне туртса çыхаççĕ те, тăрăнтарса ӳкерсе вĕлереççĕ. Унтан вара савăнса тăраççĕ хăйсем.

Аттай вулăс йенҫе выртмаран сухан, хăйар, панулми вăррине ҫупса... теприсем—çывăракан хĕрсене măшкăласа пĕтерсе, аҫасене сĕтĕрсе çырмана ывăтнипе...

— Ку темех мар, Йара-касси вĕсенҫен кайа йулас çук. Тавай мĕн те пулин çĕнĕрен!..

Маттурсем каллех йурра йара парса, Тимухха арăмĕ патнелле, хăйсен „тĕп клупĕ“ патнелле çавăрăнҫĕç.

«Сĕм, сĕм, сĕм вăрман,
Сăм вăрманта уçланкă,
Уçланкăра вĕт кĕпçе,
Татасах та çийесех,
Кĕпçе тăрри—вăр-вăр-вăр!
Хĕрсен ҫĕҫҫи лăс-лăс-лăс!»

* * *

Иара-касси йанраť. Аҫасем параппан ташши ташлатсах хирĕлсе пыраççĕ. Анҫах ку та сахал.

«Сала-кайăк салмашăн,
Епĕр хамăр сар хĕршĕн...
Хĕрсем ăçта, унталла—
Шухăш ăçталла, унталла!»

«Раçăн Çтаппанне» Перçи хĕрĕ аса килсе карĕ. Паххомккăна та... Çумкка та, Çтеквана та:

— Тавай, тавай хĕр вăрлас та, кĕçĕрех туй иртерес!.

— Тавай!, мĕн вăл туйсăр пурăнса йаш ĕмĕре иртерни?.

«Пирĕн кĕпер ҫăнкăр! тет,
Пирĕн йал хĕрсем паҫăр пек—
Паҫăртасан çу тухаť,
Çусăр шаркку çиместпĕр!..»

Кашкăрсем таçти сурăха та тытма пултараççĕ. Тытса килҫĕç. Хĕрĕ хатĕр. Анҫах туй тумалла. Мĕн тăвас? Тимухха арăм пӳртне шалтан питĕрсе кайнă. «Тĕп улахсăр» мĕнле туй тăвăн? Çитмен е хĕрсе пĕрле йапала та çаратса килнĕ. Хуйăн тухма пултараť.

„Пултарас çук—тухас çук,
Алла пăшал тытас çук!“

Ухутнĕксем сиксе те тухрĕç. Кашкăрсем хĕлле ампар тӳпине шăтарса сурăхсем тытма кĕреççĕ. Кунта та çавах ĕçлеççĕ иккен.

Пĕр ухутнĕкĕ—ик уралă кăшкăрĕ, мăрйеeрен (тăрпа витĕр) кĕрсе, шалтан питĕрнĕ улаха уçрĕ те, ыттисене кĕртсе те йаҫĕ.

— „Военнăй полошени“ тăвар! тесе приккас паҫĕ утаман Çумкка.

— Халех: терĕ Паххун Елекçийĕ.

Хăшĕ пӳрт тăрне улăхса тăҫĕç. Хăшĕ алăкра, çынсем пырса кĕресрен ҫассовой тăҫĕç,—револьвĕрпе, рыҫакпа, ҫукунккăпа. Штопă никам та савăнма ан ҫартăр!..

«Туйа туй пек тăвар и!
Сар çу пулса тăрар-и?
Епĕр, йашсем, йăл çăвĕ
Туй тумашкăн суралнă».

Хай туй çĕмĕрĕлет. Таçти крепĕсри пек. Хăшĕ сăмакун пиҫки айне выртсах ĕçеççĕ. Йурри, ташши, сикки!.. Пурăнăç!..

Хăшĕ Тимухха арăмĕн тӳшекне тăсса пăрахса паклакланса выртнă. Хăшĕ пӳрт тăрĕнҫех ĕçеççĕ. Пĕрисем пӳрт урайне хăсăкпа çăваççĕ...

Маттуртарах кашкăрĕсем арăмĕн

## Виçĕ йулташ.

Виçĕ йулташ пĕр çĕре пулнă;
Темиçе çул ăрасна пурăнса,
Пайан тин вĕсем пĕр-пĕрне курнă.
Çынна куриччен калас сăмах пит
нумай,
Курсассăн пуçри шухăш пăтранат.
Çапах та ун пек чух чи пирвай
Чĕре ыратни çинчен сăмах тапранат.
— Ну, Урлух!
Мĕнле пурăнатăн ха кĕçуне?—
Терĕ вĕсенчен пĕри йулташне.
— Мĕнле пурăнасси...—тет Урлухĕ
— Пурăнаттăмчĕ-ха йеррипе,
Мур! Çыхăнтăм вĕт Ситти пичче
хĕрĕпе!
Малтан çын çине тухрĕ сăмахĕ,
Кайран ĕçĕ шалалла карĕ.
— Иепле шалалла карĕ?
— Сута парĕ, аçа çапасшĕ!
Те епĕ ха уя ачи ашшĕ—
Алимент сăптăрат!
— Пĕр алимент çеç пулсан пырат,
Акă еп ик арăма тӳлетĕп,
Хам та выçă, çипуç питĕрĕнмен.
Куран—мĕнле тумтирпе çуретĕп?
— Апаай! Чейелĕх çук çке сирĕн
пĕрттех,—
Тет виççĕмĕш вĕсене
Кам сирĕн пек пикенсен
Укçа тӳлет мурсене!
Тӳлессине епĕ хам та тӳлетĕп,
Пĕр алимент çеç те мар, иккĕ тан,
Ун вырăнне виç ачишĕн
Арăм илет Мирунтан.
— Ех! Вастирек, Вастирек!
Тет ăна хирĕç
Итлесе тăракан Патирек.
— Алименпе тупăш курни аван,
Анчах—çын арĕмпе пурăнав!

Н. ЕВТОККИМĂВ.

---

шупашкине, çӳпçиве уçса шӳлкемине,
тата ытти йапаласене йăкăртнă.

Мухмăр валли кирлĕ вĕт-ха укçа...

Пултараççĕ çав, чанаках пултараççĕ.
Пултармасăр, Çумккасем ĕлĕкхи çĕр
улпуч ачисем. Вĕсем пример параççĕ.
Ахалех мар комсомола хирĕç. Ахаллен
мар, сиксех:

«Пултаратпăр пулмалла,
Пултарас çук, тытас çук—
Чап çинчен ма калаçас»....

тесе йурлаççĕ.

Акă йепле чăваш Муссолинисем!
Акă йепле чапа тухаççĕ Ишра-касси
çамрăкĕсем. ВАÇАНККА.

## Чăвашланатпăр.

Хăш-хăш учрештенисем Совет аппаратне чăваш ĕçхалăхĕ патне çитерессине, унта чăвашсене нумайтарах лартса чăвашсемпе чăвашла калаçмалла тăвассине- куччӑрсемпе сторăшсене чăвашран лартнинче анчах кураççĕ.

„Канаш“.



Куччӑр (лашине). Ех, Урхамах! Ма еп чăваш пулнă-ши? Ес те чăвашла каласан итлеместĕн! Манпа ларса çӳрекенсем те пĕри те чăвашла калаçмаççĕ! Ирĕксĕрех вырăса тухса кайăн кун пек пулсан.

---

## Кулачă лавккинче.

Кулачă лавккине пĕр карчăк пырса кĕрет. Сутакане ăна курсан „килех-килех, мĕн кирлĕ“ тет.

Карчăк—Кулачă пур и?

Сутакан. Пур—пур, мĕн таран сире?

Карчăк: Шурă и?

Сут. Шурă шурă, первăй сорт.

Кар. Ăшă-и?

Сут. Ăшă-ăшă, пайан пĕçерне, свеши.

Кар. Исĕм çырли йанă-и?

Сут. Йанă-йанă, мĕн таран турттарас?

Кар. Сахăр-та йанă и?

Сут. Сахăр та йанă, тăвар та йанă, пурне те йанă, мĕн таран илетĕн, кала часрах.

Карчăк: Апла пулсан парха мана пĕр татăк христарати.

УТМĂЛ—ТӲРАТ.



## Ӑслӑ ҭиркӳ хуралҫи.

„Ӑслӑ вӑрӑ пурне те вырнаҫтарат̆“ тенӗ Темйан Петнӑй пӗр пасҭӑра. Алла кӗнине вырнаҫтарма пулӗ-пулех ӗнтӗ.

„Хутар ҭиркӳвӗн хуралҫи Петӗркке (Тукассем) ҭиркӳрен шӑраnakan йапалсаене вӑрласа ерех аппараҭӗ тума кайса панӑ“. (ҪИҪӖМ).

Ҭиркӳ йапалисенҭен тунӑ аппаратран йухнӑ ерех пит хӑватлӑ пулмалла, мӗншӗн тесен ҭиркӳ вӑл хӑй те сӗрӗмлӗ йапала. Сӗрӗмлӗ йапаларан сӗрӗмлӗ йапала тусан икӗ сӗрӗм пӗрле пӗрлешеҫҫӗ те, таплитсӑ умношени пулса, пит хӑватланса кайаҫҫӗ. Маттур хӳралҫӑ. Хуралҫӑ пулин те пупсен картишне кӗме пултарнӑ.

## Туслӑ—йуслӑ.

Ҫын мӗн ӗҫе йурӑклине трукак пӗлме питӗ хӗн вара. Теприн ҭапла писсаттӗл пулмалла тен, анҭах вӑл, хут вӗренеймен пирки, ҭӑпта патӗнҭех ӗмӗрне иртерет, теприн тата аслӑ ҫар пуҫлӑхӗ пулас вырӑнне, хуликансен пуҫлӑхӗ пулса тӑрат̆.

Шемерт̆ан (Палтай вул.) йалсовет претҫетаттӗлне ҭиркӳ советӗнҭе ӗҫлеме йурӑхлӑ ҫын пулнӑ кӗн.

„Вӑл молепӗн тунӑшӑн пупсене укҫа йал пӳтшетӗнҭен парса йанӑ“ (АРПУС).

Вӑл претҫетаттӗл пулпа туслӑ иккен. Иккӗшне пӗр урапа ҫине лартса сута илсе кайассӑн, тус хырӑмне йус кӗмӗши?

## Хӑйне-хӑй вӑрҫакан.

Хӑйне-хӑй вӗлерекенсем ҫинҭен илтнӗҭӗ, хӑйне-хӑй вӑрҫакан ҫинҭен илтмен вара. Салтакра та пурӑнтӑм, анҭах ун пек ҫынна кураймарӑм вара.

„Хыймала-кассинҭе (Шурҭа вул.). Какаҭа Кӗркури пӗр касра 10 тенкӗлӗх ӗҫсе йанӑ та, хӑйӗн килӗнҭи ҭӳреҭисене ҭулпа персе ҫӗмӗрсе пӗтернӗ“.

(СИЛЕР).

Пит хайар иккен вӑл сирӗн Какаҭа Кӗркури. Хӑйне-хӑй ма хӗнеменши? Пит кулӑшла пулат̆ҭӗ.

## Ҫиҫиф.

Авал пӗр Ҫиҫиф йатлӑ паллӑ ҫын ҭӑнкӑ ту ҫине ҭул кустарса хӑпартассӑн пулнӑ: ҭулне ҫӳлелле кустарса йарат̆ тет те, ҭулӗ хыҫҫӑнах ҫӗре персе анат̆, тет. Ҫавӑн пек ех Мӑрат вулӑсӗнҭи Ҭураҭӑк ҫынисем те.

„Растраттӑ тӑвакан копператтив прикашҭӗкӗсене вырӑнтан кӑларса йараҫҫӗ, анҭах вӗсем вырӑнне каллех растраттӑ тума йуратакан тепӗр прикашҭӑк кӗрсе ларат̆. Ҫапла вӗсем пӗр ҫулталӑк ҫурӑ хушшинҭе виҫӗ прикашҭӑк улӑштарнӑ, виҫҫӗш те растратҭӑксем пулнӑ. Виҫҫӗш пин тенке йахӑн салатса йанӑ“. (АЛА).

Ҫиҫиф пек хӑтланса май килмӗ. Растратҭӑксене сута парӑр. Сутран хӑраҫҫӗ вӗсем. Тупата!

## Урнӑ кашкӑр.

Пӗри ҫырат̆:

„Штанаш комсомол йаҭейкки ҭлекӗ Костыҭев хӑй комсомолта тӑрат̆ пулин те, салтака кайнӑ майӗпе ҫуттине ӗҫсе урам тӑрӑх урнӑ кашкӑр пек кӑшкӑрса ҫӳрет. Тӗрлӗ кирлӗ мар сӑмахсем каласа, хуликан пек аташат̆. Ана куншӑн темиҫе хут та вылӑвӑр панӑ, анҭах пулӑшмаст̆“.

„Капкӑна“ лекксен пулӑшаканҭӗ. Пулӑшмасан килсе калӑр. Урӑх реҭепт та тупса пама пултаратпӑр.

# Хуликансемпе кĕрешес ĕç.

1. Хуликанлăх вăл халăх çутта тухайманнинъен килет.



Милитсионер. Ку хуликана çĕрле хуйнар çутти патне илсе пырса пăхас. Ахалĕн ăна паллама хĕн. Çутта кăларас.

2, Хуликанлăхпа кĕрешнĕ çĕрте çамрăксене ;конъертсем—-çпектаклĕсем кăтартни усăллă.



Кантăк хуçи. Ма ватрăн мая кантăка? Хăлхунтан йарса тытсан, кăтартăп епĕ сана конъерт. Упа йурри йурлăн.

3. Тÿрленмесен тĕрмене хупмалла.



Хуликан (йурлать). Хĕвел тухать, хĕвел анать, ман тĕрмере, ех! тĕттĕм.

---

## «Капкăна» тав тăватăп.

Тавта пуç̌сана,
Пирĕн ъăваш муъи «Капкăн!»
Есĕ пĕртен пĕр «Канаш» хаçатран
Çуралнă ватă ывăлĕ.
Есĕ уйăхра пĕрре тухса,
Ъăваш ъĕрине лăплантаратăн
Есĕ пур çĕртре те пур:
Тĕттĕм йалсенъе, уърештенисенъе
Тата ирсĕрлĕх тăвакан аллинъе те
Есĕ ирсĕрлĕхсене тÿрлетекен прохвессăр.
Пур ирсĕрлĕхе те есĕ тÿрлететĕн
Сан патна темиçе çĕр çыхрăмран
Ирсĕрлĕхсене йалкорсем çавăртса леçеççĕ.
Ей, ъуна лăплантаракан „Капкăн",
Сана ъĕнттăрти „Крокотил" вырăнне хурса
Хисеплеме тĕрĕс тивеçлĕ.
Пур кулу—мыскара санран килет.
Ирсĕрлĕхсен вилĕмĕхне есĕ паратăн,
Есĕ кашнă хресъен çынниин
Ăсне-пуçне, алли-урине кĕрсе вырнаç.

КУСНАР

---

## Çăмăр пирки.

— Мĕн тума кăçал çăмăр питĕ çурĕ?

— Илле пророк отпуска кайнă. Хăй вырăнне Тавита хушса хăварнă. Тавит кăрантине пăрса йанă та, ъарма пĕлмест. Çавăнпа пĕр май çăмăр çурĕ.

# Пирĕн йал копператтив правленине кĕртме паллă тунă кăнтитатсем.

## Епĕр камшăн майлă, кама хирĕç сасă паратпăр.



Ак кăнтитат Махаҭа.
Пурте пĕлеççĕ ăна:
Тўрĕ, вăтам хĕресҭен,
Хастарлă çын, пит ĕçҭен;
Хут вулама йе çырма
Пит те аван пултарат̆,
Халăх ĕçне пуçарма
Тимве хуреа тăрăшат̆.
Уншăн сасă панă ҭух
Епĕр майлă тăратпăр.



Акă çамрăк çын—Актак,
Хĕрлĕ çартан килнĕскер.
Çивĕҭ вара ку салтак,
Пуçпех Совет майлăскер.
Тĕрлĕ хаçат-шурналсем
Илсе вулат̆ вăл нумай,
Ун ăсăпе йал-йышсем
Усă кураççĕ самай.
Уншăн сасă панă ҭух
Епĕр майлă тăратпăр.



Ак кăнтитат Мăн Иакур.
Ҭухăнрах çын,—пит маттур,
Тўрĕ çын вăл, тирпейлĕ,
Пур ĕçре те йĕркеллĕ.
Сăхă пуппа кулака
«Çăхансем»—тет, йуратмаст̆,
Тĕрлĕ ирсĕр ултава,
Калама çук, кураймаст̆.
Уншăн сасă панă ҭух
Епĕр майлă тăратпăр.



Ак кăнтитат Ахванеç,
Шыçмак пуйан, паллă çын.
Ун тусĕсем—патри пуп,
Усламçăсем, сутуçсем.
Кирлĕ ҭух вăл, тилĕ пек,
Йăпăлтатат̆, шăлăнат̆;
Кăсйи тулсан, сысна пек,
Ҭĕнмест, сикмест—мăш-ш шт
тăват̆.
Ку çăхана суйласан—
Копператтив пĕтрĕ сан!
Уншăн сасăлана ҭух
Епĕр ăна хирĕç.





Ак кăнтитат Хăритун.
Ну. какалĕ ҫитнĕ ун:
Ҫурт̧ĕсем ун йухăннă
Вити карти хупăнсă,
Пухăва вăл пит тухмаст̆,
Тухсан—тӳссе лараймаст̆—
Ĕмет-ĕмет т̧ĕлĕмне,
Унтах кайлт̆ тĕлĕрсе.
Правленийе ку лексен—
Ĕҫ ăнасса ан ĕнен!
Епĕр ăна хирĕҫ.

Акă тата Тимухха.
Ку тухкалат̆ хăш пухха!
Ант̧ах унта ĕҫшĕн мар,—
«Ĕҫкĕшĕн» ҫех мăн ҫăвар.
Т̧ас-т̧асах вăл урамра
Ӳсĕр, лăнк-ланк уткалат̆,
Ĕҫсе кӳпсен, кĕт вара,
Кирек кампа ҫыхланат̆.
Ҫамрах пит̆ĕнт̧е йалан
Тискер кĕсен. йе суран.
Епĕр ăна хирĕҫ.
ЕЛКЕР

## Ĕҫкĕ ҫикĕре.

Ула лаша кӳлтĕмĕр
Иккĕн пĕрле лартăмăр.
Уй-уй урлă килтĕмĕр
Т̧иркӳ йалне кĕтĕмĕр.
Йурла йурла кайатпăр
Кукăр макăр урампа.
Пурнаттăри? тийетпĕр
Ҫыннисене арăмпа.
Пире хирĕҫ вĕсем те
Ĕҫлĕксене хываҫҫĕ.
Пурнатпăрха!—тийеҫҫĕ,
Пăкса тăрса йулаҫҫĕ.
Сар пахт̧алăх курăнат̆
Пĕр пурасса уҫăлат̆.
Кил хушшине кĕтĕмĕр
Мĕн пур ҫукне куртăмăр:
Икĕ хăна ик мушик
Тапкăллă та т̧ышкăлла
Кил картинт̧е выт̧аҫҫĕ.
Куҫ харшийĕ кăн-кăвак
Пит ҫăмарти ҫара йун.
Ĕсĕр пуҫăм уҫălт̧ĕ,
Тискер кино салант̧ĕ.
Кил картийĕн варĕнт̧е
Ҫтаппан пит̧т̧и карăнт̧ĕ.
Ялсовет̧ĕ те пыт̧ĕ,
Милитсийĕ те килĕ.
Ĕҫĕ кайĕ шаралла
Шурă ҫурталла.
МИШЕР.

## Суйлав хыҫҫăн.

— Есĕр ма кивҫен укҫа паракан йулташлăха кулака кĕртсе лартрăр?

— Растраттă тусан тӳлеме пултартăр, тесе.

— Апла сан шухăшпа Калинин вырăнне те ĕлĕкхи Микулай патшана, йе пĕр-пĕр улпута лартмалла-и?

— Унта темле тумалла, пĕлместĕп.
ТАВСИИА.

### 10 улма.

Вĕрентекен: Ну, Иван! Епĕ пайан пасарта пĕр кĕренкке улма илтĕм, мана 10 улма килт̧ĕ. Епĕ вăл улмаран 2 улмине хам ҫирĕм. 3 улмине сана патăм. Миҫе улма йулт̧ĕ хама?

Иван: Сана 8 улма йулнă.

Вĕрентекен: Ма апла?

Иван: Мĕншĕн тесен, есĕ мана 3 улма панă тесе суйан, есĕ мана пĕр улмине те паман, ҫавăнпа сана 8 улма йулнă.

Т̧ЫРКУЛ̧.

# Туман ĭыха пилĕкне хуçакансем.

Тĕлĕнмелле хÿхĕм çын вăл, пирĕн хвершăл. Вăл Ишекре ҫухне «халăх ĕçне тума йуратаŤ» тени илтĕнкелетҫĕ, майрийĕ те пасартан пасара услам туса çÿретҫĕ. Шурҫана куçнăранпа вăл халăп тĕрĕссине хамăрах куртăмăр. Ималта вăл çитменни пĕр ĕçкĕ те çук, питĕ вашават çын вара.

Çурхи ăшă кунсенҫе хвершăл Песпоротăв уçăлма урама тухнă. Çав вăхăтрах вулĕçтăвкомри стурăш Тÿрĕн Ваçли пуç хĕрнипе мăкăрлатса иртсе кайнă.

— Страствуй, кумаҫок, ăçта ҫуптаран?

— Хамăн карҫăк патне, тет Тÿрĕн, есĕ ман карҫăка аҫа тумалли имçам туса пар-ха, аҫа теме туми пулҫĕ арăм, куми-мĕнĕ хăварах пулмалла ĕнтĕ.

Хвершăлăн ҫун кĕрсех кайрĕ.

— ИŤот тет, вăл пирĕн ĕç, йарăпăр еппин пĕр витре...

Майлашаççĕ, ĕç тăваççĕ: ĕçне тунăшăн 5 тенкĕ, ыттине ĕçсе йамалла.

Тепĕр кунне, мартăн 30-мĕшĕнҫе, ир ирех хвершăл çырса панă хутпа Насарăв Шуркки Шупашкара тухса кайаŤ. Ку ĕнтĕ унашкал ĕçсене тума пултараŤ, страхкассăран Тÿрĕн ваҫҫи 17 тенкĕ те 55 пус сăптăрса тухаŤ. «Креçтинă» ĕнтĕ курăнсах тăраŤ.

Çурхи каç—илемлĕ каç. Песпоротăв пÿлĕмĕнҫе çап-çутă. Кĕгнĕ çынсем пухăннă. Иурлани, палалайккă калани илтĕнет. Кулкалаççĕ, пылаклăн калаçаççĕ (урамра çынсем курса тăраççĕ). „Иеш, пей, веçелиç, на ҫувашке не шениç, тет хвершăл майри Тÿрĕне, саккускă наша, выпивкă ваша".

Çав вăхăтра Тÿрĕнĕн майри Ҫутмилă хăрушă тĕлĕк курса выртнă: темле сухалсăр хвершăлсем ăна аҫа çураттарасшăн ирĕксĕр мекĕрлентереççĕ пек, çуратмасан ҫĕке çĕртен шыва сиктермелле пек. Ак, çыран хĕрнех сĕтĕрсе çитерҫĕç пек, айалта, лапара, тимĕрçĕ пăхса тĕлĕнсе тăраŤ пек, мекĕрленетĕп-мекĕрленетĕп, аҫа çураласси палли те çук, çав сехетрех шыва тĕкрĕç йаҫĕç пек те, хăранипе вăранса кайрăм, алăкран ĕссĕр упăшка кĕрет пек.

Икĕ-виçĕ уйăхран Песпоротăв Ҫутмилăна хăйĕн патне ҫĕнтерсе, питĕрĕнсе ларса çур кун хушши çапла хăтăрласа вĕрентнĕ:

— Ыран санăн милитсипе Покровскине каймалла, унта сана тухтăр аҫа тунипе-туманнине пăхтармалла; есĕ, аҫи вилĕ çуралҫĕ те, совета мĕне пĕлтермесĕрех пытартăм те, асту, ахалĕн лайăх пулмасŤ, тет.

Çав вăхăтра хвершăлăн майрийĕ пыракан ҫирлĕ çынсене: хвершăл килте çук, хулана кайрĕ, тесе ăсатнă.

Çапла хвершăл Песпоротăв хăйĕн ĕçне пĕтерҫĕ. Анҫах Ҫутмилăна хаҫ те канăçлăх çук, ăна кашни çынах курсан:

— Сана лайăххах пулас çук, тухтăра тÿррипе каламалаҫҫĕ, теççĕ.

Пултараŧ çав пирĕн Песпоротăв!..

ÇЫРАМПИ.

## Ĕлĕкхи йăлапа.

Писенер—оурăмри Михал Йакурĕн йăран çинҫен сухан çухалнă. Сухан вăрлакана вĕлерес тесе вăл сухан йăран çине кашкăр шăмми хурса урапа кÿпҫек витĕр çунтарнă. Вăрри çапах вилеймен.

ЙУ КУС.



Вăрри (айакран пăхса тăрса). Темĕн ҫухлĕ тĕшмĕшлесен те мана вĕлерейменĕн. Тĕшмĕш кутне вĕри шĕшлĕ, тенине илтнĕ-и ĕс.

# ТИСЛӖК.



— Аҭамсем, есӗр мӗн таваттӑр?

— Ак ҫарса пӳрт турӑмӑр, хамӑр, лаша, ӗне, тата аттепе-аненне те турӑмӑр.

— Ма мана тумарӑр?

— Сана тӑвас пулсан тислӗк нумай кирлӗ пулай. Ҫавӑнпа тӑвас темерӗмӗр.

## Пыр кӑтӑкланай.

Вӑхӑҭӗ-вӑхӑҭӗпеле ман анҭах мар, Ентри Ваҫҫилҭӑн та, Савели Михвотӗн пыр шӑтӑкӗсем типсе ҫитсен кӑтӑкланаҫҫӗ. Вара ҫав кӑтӑклӑ ҫынна темӗн тутарма та пултарай. Ара епӗ хамран пример илсе калатӑп, тӑвансем. Акӑ епӗ хамах пыр кӑтӑклана пуҫласан аптранипе нимӗн тума пӗлмесӗр темӗн сутса ӗҫме те хатӗр, хам ҫари тумтире сутса ӗҫмесӗр те пыр лӑпланамаст. Епӗ тата ха, Ентрипе Михвот, ун тӗлӗшӗнҭен. вӑл ҭирпе манран та хытӑрах ҭирлеҫҫӗ пулмалла. Ҭанах та кӑсйара пӑртак пулмасан, кӑтӑка ҭарма ҫуккине хӑвӑрах пӗлеттӗр ӗнтӗ, вара ирӗксӗрех халӑх майӗ ҫине, хамӑр ҭуман кӗрсесем ҫине утланнӑ пек утланмалла пулай. Ҫавнашкалах Ентрипе Михвот те аптранипе халӑх майӗ ҫине мар, вӗсем тата ҫӳлерех, пуҫӗ тӑрнех улӑхса ларҭӗҫ. Ара хӑвӑр та пӗлеттӗр пулмалла, пуҫ тӑрӑнҭе йӑвӑр пулсан кирек-камӑн та тӑнӗсем шӑшисем пек таҫти шӑтӑка кайса кӗреҫҫӗ. Вара ирӗксӗрех сӑмсаран вӗренпе тирсе ҫавӑтнӑ пек, Ентрипе Михвот хыҫҫӑн утмалла пулай. Вара ҫырма ҫатрари йӑвӑҫсен, хӑранипе куҭӗсем ҭӗтресех ларӗҫҫӗ, кӗҫ пуртӑ лекети—тесе каҫӑлтатса ҫеҫ лараҫҫӗ. Пӗр икӗ ҫын пырӗ кӑтӑкланнипе, ку ҭир пӗтӗм халӑха йерет, пурте вара тытӑнаҫҫӗ ҫырма-ҫатрари йӑвӑҫсене сутса ӗҫме. Ҫапла ҫав пыр кӑтӑкланни етеме тем тума та пултарӗ. Вутлан ҫыннисем вӑл пыр пирки 16 тенкӗлӗх пӗр каҫрах сыпса йаҭӗҫ, мур ҫийешшӗсем.

ШӐШИ.

# Шурналис плок-нотӗнђен.

Шурналиссем нумай ӗнтӗ. Какрашран та тухмалла. Ӑҫта пынӑ унта ҫапкаланса ҫӳреҫҫӗ. Мӗнле те пулса хаҫат вађђи ҫӗнӗ, хресђенсене кирлӗ маттериалсем тупасшӑн. Ҫӗнӗ, ђӗрӗ, маттериал тупайман шурналис, шурналиси вӑл? Хлам.

Ҫавӑнпа та «Канашӑн» пӗр шурналисӗ уђрештенисем, комиссариатсем, претприйаттисем тӑрӑх ҫӳреме тухса кайат̆. Хӑй мӗн курни-илтни ҫинђен хӑйӗн плок-нођӗ ҫине ҫырса пырат̆.

Акӑ, уҫса пӑхӑрха плок-нотӑн пӗрер странитсине, мӗн ҫырса хунӑ вӑл унта.

«Нойапӗрӗн 8-мӗшӗ. Ретакси мана Ҫӗр Комисҫинђен хресђенсене кирлӗ ђи лайӑх маттериал тупма хушрӗ. Ҫавӑнпа та Ҫӗр Комисҫине карӑм. Пырса кӗтӗм, тӑтӑм.

— Ҫекреттар хӑшӗ пулат̆?

— Сире мӗн тума кирлӗђђӗ?

— Хаҫат ҫинђе пӗрер маттериал ҫутатса парас тетӗп.

— Рапкиоран хут пури?

— Ҫук.

— Апла епӗр кореспотентсене нийепле ӗҫ те кӑтартма пултараймастпӑр. Ун ҫинђен нийепле стат̆йа ҫинђе те каламан.

Стат̆йа ҫинђе каламан тӑк, ним тума та ҫук. Тухса кайас пулат̆.

Вара Ҫӗрӗҫ Комиссарнатне пырат̆ пулас. «Акроном Петров», тесе ҫырса хунӑ плок нот ҫине.

«Пэтрова шыраса тупас терӗм. Ӑна Веткӑ кӗпӗрнине ҫӗр пӑхма кайса килнӗ терӗҫ-ха. Мӗнле ши? Ҫӗрӗ лайӑхши?

Петрова шыратӑп. Вӑл месткомра пулас терӗҫ. Местком пӳлӗмне карӑм. Ҫав сӗтел ҫинђе ларат̆, терӗҫ. Сӗтел патӗнђе Петров ҫук, хуђӗсем анђах. Машшинискӑсен пӳлӗмӗнђе терӗҫ. Петров унта. Ђӗнетӗп.

— Ђем моку Вас слушит̆?

(Тупа та туршӑн, ним тума та аптраса тӑратӑп. Те вырӑсла каланисене те ђӑвашла ҫырас, те вырӑс сӑмаххисенех ђӑвашла саспаллисемпе вырӑслах ҫырас!)

— Есӗр Веткӑ кӗпӗрнине ҫӗр пӑхма кайса килнӗ терӗҫ, ҫав ҫӗр ҫинђен пӑртеккех каласа пар-ха мана. Мӗнле, ҫӗре куҫса ларма йуракли, йурӑхсӑри.

— Епӗ халӗ никама та нимӗн сӑмах та ун пирки каламастӑп.

— Ма тата?

— Хам токлат тӑватӑп. Вӑл токлата ҫирӗплетсен, питӗ лайӑк, тӗплӗ, вӑрӑм стат̆йа хамах «Канаша» ҫырса паратӑп.

— Ҫырасси ҫырха та, халӗ мӗн те пулса кӑтарт-ха.

— Ҫук, ҫук. Иурамаст̆.

Кун хыҫҫӑн тата вӑл темӗн те ҫырса пӗтернӗ, анђах пӗтӗмпех ҫырмӑпӑр. Тен вӑл, хӑйӗнђен ыйтмасӑр ҫырнӑшӑн хамӑра ҫиленӗ. Тата—плок-нот ҫине ҫырнисене пурне те ӑнланмалла мар. Темскерле прикказсем парас пулат̆. Кун пек хытланни—пӳрократ, ђиновникле ӗҫлени пулат̆, тенине.

Вӑл тем те шухӑшлӗ. Ӑҫта ун хыҫҫӑн пирӗн пырас-ха.

— Сана мӗн кирлӗ, тесе хыттӑн кӑшкӑрса каланине те пӳрократ, тейӗ.

Тӗлӗнмелле ку ђухнехи шурналиссемпе. Стат̆йасем ҫук ҫӗрте ҫапкаланса ҫӳреҫҫӗ. Шурналиссене урамра ҫӳремелли стат̆йа тавраш мӗнле котекса ҫинђе те пулса пурши!

ПИНЕР.

## Песприсорнӑй ађа.



Ех! ма пурнӑҫ мар ҫак ађан...
Ашшӗ виҫҫӗ-тӑваттӑ, пурте укҫа параҫҫӗ... Ман ма ҫавӑн пек аттесем нумай марши?!

Й а л.

## Нурăс копперαттивĕнђе.




Копперαттив пуҫлăхĕ. Ҫынсем куриђен йанклаттарарха. Хăвăртрах ĕҫ!

Прикашђĕкĕ. Ĕҫес тесен ҫаĕ пĕлĕт ҫинђен татăлса анма та хатĕр.

Тепĕр ђленĕ. Ах, мурилесшĕсем, мана вађђи хăварас ҫук ĕнтĕ кусем...

---

## Сатађ туппи.

Иртнĕ нумĕрте ҫапăннă вуламалли сатађ туппине ҫаксем шутласа кăларђĕҫ: Кир. Иеринке, Ђиркуђ, Кулай, Микихвĕрăв т. ыт. те.

Туппи ҫапла: «Капкăн» шурнал ҫулталăка пĕр тенкĕ тăраҕ.

## Кам йурри?

(Ђастушкă).

Пăкăр хуран, йĕс труба,
Камăн мĕн ĕҫ пур унпа?
Хурăн йăвăҫ кукрешки,
Ҫăка йăвăҫ кункрашки.
Иух, йух, ерех, шĕпĕртет,
Савăн шăршу илĕртет;
Милятси те, акĕнт та,—
Ĕҫет сана такам та!
Иух, йук ђасрах ес, ерех!
Иухса пĕтха кĕҫĕрех—
Мана текех ан ђăрмантар,
Советсене ан тыттар.

ОЛЕМ.

## КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

Утика. Авалхи анектотсене «Капкăна» кĕртсех каймастпăр. «Капкăн» исторăллĕ шурнал мар, хађхи пурнăҫăн кулăшла йенĕсем ҫинђен ҫырнисене хаваслансах кĕртетпĕр.

М. Куҫмина. Крылов ҫырнă пасђăна хам ҫыртăм тесе „Капкăна“ кĕртес терĕни, ађам? Анђах Крыловăн «Каш-кăрпа тăрна» йатлă пасђăсанăн „Выҫă—тукмак» йатлă калавран лайăхрах. Крылов сăвăласа ҫырнă, есĕ калавна сăвăлама мар, саваламан та.

Куракана. Тапак туртакансен ҫписки пире кирлĕ мар. Ун вырăнне «Капкăн» илес текенсен ҫпискине туса йар.Ăна варз хаваслансах йышăнапăр.

КАМ ХАЛИЂЕН „КАПКĂН“ ШУРНАЛ
ҪЫРĂНСА ИЛМЕН.

Хакĕ ҫапла:

| | |
|---|---|
| 1 уйăха | — 10 пус. |
| 3 „ | — 30 „ |
| 6 „ | — 60 „ |
| 1 ҫула | 1 тенкĕ. |

Укҫа вырăнне марккăсем йарсан та йураҕ. Атрĕсĕ ҫапла: Чебоксары. Контора газеты „Канаш“.

Хуђĕ ҫине „Капкăн“ илме тесе ҫырма ан манăр.

# АВАЛХИ ПЕК.

Ҫăваш республĕкĕвҫе хăш хăш копператтивсем кăрăççинпа сутă тăвассине тупăшлă ĕç мар тесе, краççын сутуилăвĕнҫен пăрăнса тăраççĕ.
(„Канашăн" 252 (1645-№).



— Ах, тур-тур! Авалхи самана çитсе килҫĕ пулмалла. Авалхи пек хăй ҫиккипе хăйă пурăнăçĕ çитсе кĕҫĕ.

— Копператтавра айăпĕ. Килĕс суйлавра претçетаттĕлне сирпĕнтерсе кăларас пулатха...

Отв. Редактор А. ЗОДОТОВ.

Чувашлит № 1005. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга".